Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

20 (7874) № * Юн кун, 2011 çулхи пуш (март) уйăхĕн 23-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Мартăн 25-мĕшĕ – Культура ĕçченĕн кунĕ

## Лайăххи культурăран пуçланать

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Нина Арсентьевна Чернова Тренккăри Культура çурчĕн ертӳçинче вăй хурать. Культура сферинче ăста специалист чылайранпа тăрăшать, ертӳçĕре ĕçлеме пуçлани вăхăт нумаях иртмерĕ пулсан та унăн ăсталăхĕ куç кĕрет.*

*Уйкас Янасал тăрăхĕнчи Сосновка ялĕнче çуралса ӳснĕскер мĕн ачаллах юрă-кĕвĕ тĕнчине туртăнать, çакă вара унăн малашнехи пурнăçĕнчи çулне уçма пулăшать. Пурнăç кустăрми ăна Тренккă тăрăхне илсе çитерет. Музыка енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ ăста ответлăха туйса тăрăшать. Чунпа парăннă ĕçре çĕнĕлĕхсене вăй илтерет.*

*Кунтах вокал, хор, ташă тата ытти кружоксем ĕçлеççĕ, çакăнтах художество пултарулăх ушкăнне йĕркеленĕ, вуннăмĕш çул ĕнтĕ вăл сцена çинче. Çак тапхăрта ялти артистсем чылай çĕре çитсе халăха илемлĕ юрă-кĕвĕпе тыткăнларĕç. Кунти Культура çуртне çынсем хаваспа та йышлăн çӳреççĕ.*

*– Эпĕ çак майпа усă курса вĕсене тав сăмахĕ каласшăн. Вĕсемпе кирек епле мероприятие те ирттерме çăмăл, – терĕ Нина Арсентьевна кунта çӳрекенсен пулăшăвне хакласа.*

*Эпир вара культура ĕçченĕсене професси уявĕпе саламлатпăр. Малашне те ял çыннин культура шайне аталантарассишĕн тăрăшма вăй-хал сунатпăр.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**



**Хисеплĕ культура ĕçченĕсем, çак сферăн ветеранĕсем!**

Сире çывхарса килекен хăвăрăн професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Эсир хамăр халăхăн культурине, ырă йăли-йĕркине сыхласа хăварса малалла аталантарассишĕн тăрăшатăр. Районта пурăнакансем пушă вăхăта усăллă тата интереслĕ ирттерччĕр, хăйсен пултарулăх шайне çĕклеччĕр тесе çине тăратăр. Çынсем ăс-хакăл, нравственноç тĕлĕшĕнчен аталаннинче те, çитĕнекен ăрăва воспитани парассинче те сирĕн ĕçĕр çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Юлашки çулсенче эсир çĕнĕлле ĕçлени, пурнăçпа тан пыма тăрăшни куç умĕнчех. Районти 30 библиотекăра ял çыннишĕн хăйĕн тавра курăмне аталантармалли пĕтĕм майсем пур. Паян библиотекăсем тулли информаци илме май пур вырăн пулса тăнипе пĕрлех ял çыннишĕн тĕрлĕ темăпа чуна уçса калаçма май пур, чун туртакан вырăн пулса тăчĕç. Çакă йăлтах сирĕн професси шайĕ ӳссе пынине, эсир хăвăрăн тивĕçе чун-чĕре хушнă пек пурнăçланине кăтартса парать. Тавах сире çакăншăн.

**(Вĕçĕ 2 стр.).**

Ял хуçалăхĕ

## Вырăх апачĕ турттараççĕ

Выльăх апачĕ çитмен пирки кăçал выльăхсене йĕркеллĕ хĕл каçарассипе йывăрлăхсем пур. Çакă вăл иртнĕ çул çанталăк типĕ тăнипе сыхăннă. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса районти агропромышленность комплексĕн предприятийĕсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине тата выльăхсен хальхи йышне сыхласа хăварма ытти регионсенчен выльăх апачĕ кӳрсе килесси анлă сарăлнă. Иртнĕ çулхи çу уйăхĕсенчен тытăнса выльăх апатне Чул хула, Киров, Владимир, Ульяновск, Рязань облаçĕсенчен, Мăкшă, Çармăс, Тутар Республикисенчен, Чăваш Енри ял хуçалăх предприятийĕсенчен турттарнă.

Мартăн 21-мĕшĕ тĕлне районĕпе утă пĕтĕмпе 1462 тонна, улăм 2204 тонна, сенаж 458 тонна, силос 709 тонна, тырă фуражĕ 2800 тонна, хывăх 411 тонна, комбикорм 9865 тонна, витаминлă курăк çăнăхĕ 4 тонна кӳрсе килнĕ.

**Хамăр инф.**

Çурхи ейӳ

## Пысăк шыв килет

Çурхи ейӳ – çулленех пулакан çут çанталăк пулăмĕ. Акă çак кунсенче те çанталăк ăшăтрĕ те кăçал хулăн çунă юр шывланчĕ, унăн йывăрăшĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Çакă çурт-йĕрсемшĕн пысăк йывăрлăх кăларса тăрать: йĕпе юр йывăрăшĕпе вĕсем ишĕлес хăрушлăх пур. Çавăнпа та паян пурин те – килте-и е производство объекчĕсенче – çурт-йĕр çивиттийĕсем çинчен юр илсе пăрахассипе ĕçлемелле. Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче ку ĕçе маларахах пуçларĕç. Çавăнпа та чылай хуçалăх фермисенче сарай çивиттийĕсене юртан тасатнă та ĕнтĕ. Ку лайăх, анчах кам ĕлкĕреймен – ку ĕçе ыранхи куна хăвармалла мар.

Çурхи шыв çырмасене ансан унти плотинасемшĕн пысăк хăрушлăх тухса тăрать. Вĕсем татса каясран сыхланасси ял тăрăхĕсемпе вырăнсенчи хуçалăхсен пĕрлехи тăрăшулăхĕ пулмалла. Çакна палăртатăп, район территорийĕнче тĕрлĕ çулсенче тунă шыв плотинисем 71 шутланаççĕ. Чи пысăкки – Турай плотини. Ун хыççăн – Анатри Панклири плотина. Плотинасемпе пĕвесем уйрăмах Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче йышлă. Иртнĕ çулсенче уйрăм çын харпăрлăхне илнĕ ял пĕвисем те тимлĕх ыйтаççĕ.

Юр ирĕлнĕ май сĕрмелли-çунтармалли материалсем, минераллă удобренисемпе ытти им-çам упранакан складсем тĕлĕшпе тимлĕх пысăк пулмалла. Шыв плотинисем таврашĕнчи пекех кунти лару-тăрупа та тăтăш паллашса тăмалла.

**Н. МИЛЮТИН,**
**район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру секторĕн ертӳçи.**

### Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене пĕлме

Саккунпа килĕшӳллĕн ял тăрăхĕсен администрацийĕсем усă курман пай çĕрĕсене муниципалитет çине илессипе ĕçлеме пуçларĕç. Çавна май çĕрпе усă курман çынсен списокĕсене райхаçатра пичетлеме сĕнеççĕ.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен хăйсен çак списоксене редакци бухгалтерине (тел.: 62-1-35) хут тата электрон версипе çитермелле. Хут версире пуçлăхăн алă пусса тата пичет çапса списока çирĕплетмелле. Word текст редакторĕнче наборланă текста флешкăпа илсе пымалла. Мĕн пур материалсене хаçатра пичетличчен эрне малтан редакцие çитермелле.

Ятарлă килĕшӳ çырма пĕрле пичет пулмалла.

**Райхаçат редакцийĕ.**

Республикăра

## Правительство пуçлăхĕ – О.В. Макаров

Ĕнер ЧР Патшалăх Канашĕн ларăвĕ О.В. Макаров кандидатурине пăхса тухса ăна республикăри правительство пуçлăхне çирĕплетнĕ.

Олег Витальевич Макаров 1974 çулта Çĕнĕ Шупашкар хулинче çуралнă. И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ. Хыççăн пĕлĕвне тĕрлĕ енлĕ ӳстернĕ. Вăл юсавçă слесарь вĕренекенĕнчен пысăк предприяти ертӳçине çити ӳснĕ.

2000 çултан пуçласа 2008 çулччен «Волга – Трейд» обществăра, «САН Интербрю» обществăра тĕрлĕ должноçсенче ĕçленĕ, Шупашкарти сĕт завочĕн генеральнăй директорĕ пулнă.

2008 çулхи апрельтен «Чебоксарский» сĕт комбиначĕ» филиала ертсе пынă, «ЮНИМИЛК-Волга» представительствин директорĕнче ĕçленĕ.

2008 çулхи октябрьтенпе «ЮНИМИЛК-Урал» Екатеринбургри представительствин директорĕнче вăй хунă.

## Тăрăшуллисене патшалăх пулăшать

РФ Правительствин пуçлăхĕ В.В. Путин ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе видеоконференци ирттернĕ.

Пирĕн республика ĕне выльăх йышне сыхласа хăварнă регионсен йышне кĕнĕ. Вĕсене валли федераци 5 млрд. тенкĕ укçа уйăрать. Çапла вара выльăх йышне чакарман пирĕн хуçалăхсем те Мускавран килекен хушма укçана тивĕçес шанчăк çуралать.

2010 çулхи шăрăха пула çĕр-шывра 13 млн. гектар çинче тухăç пĕтнĕ. Кĕрхи культурăсене те 20 процент сахалрах акса хăварнă. Пирĕн республикăра кăтарту унчченхи çулхи шайрах, кĕр тыррисен лаптăкĕ 119 пин гектар. Çурхисене 166 пин гектара, çĕр улми пуссисене 54 пин гектара çити ӳстерме палăртаççĕ.

В.В. Путин çуртрисен лаптăкĕсене ӳстерме тĕллев лартнă. Çĕр-шыв правительстви çакна валли 5,5 млрд. тенкĕ уйăрнă.

Кăтартусем

## Камăн сăвăм пысăкрах?

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче кăрлач уйăхĕн 18-мĕшĕ тĕлне пĕр ĕне пуçне вăтам сăвăм мĕнле пулнине кăтартни (килогрампа).**

**Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах). 3. Хуçалăхри ĕнесен хисепĕ.**

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 7,0 | 0,6 | 128 |
| «Восток» | 8,2 | -6,0 | 81 |
| «Герой» | 9,5 | -1,7 | 176 |
| Ильич яч. хис. | 11,1 | -3,2 | 244 |
| «Оринино» | 12,8 | -0,1 | 205 |
| «Передовик» | 11,9 | 4,2 | 80 |
| «Свобода» | 12,1 | -0,4 | 291 |
| Суворов яч. хис. | 17,8 | -1,5 | 200 |
| «Ударник» | 10,2 | -1,8 | 510 |
| Чапаев яч. хис. | 7,2 | -1,1 | 102 |
| Чкалов яч. хис. | 9,8 | -0,5 | 66 |
| «Путь Ильича» | 9,3 | – | 70 |
| АПФ «Колос» | 12,0 | 2,0 | 3 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **11,1** | **-1,1** | **2156** |

Саламлатпăр



Пирĕн анне, асанне, кукамай **Вера Михайловна СКВОРЦОВА** Отаркка ялĕнче пурăнать. Мартăн 25-мĕшĕнче çывăх çыннăмăр 65 çул тултарать. Анне мĕн пĕчĕкрен ĕçпе пиçĕхсе ӳснĕ, шкулта 7 çул вĕреннĕ хыççăн колхоз ферминче пăрусем пăхнă. Ĕне сунă çĕрте тивĕçлĕ канăва тухиччченех тăрăшнă. Вăл ĕç ветеранĕ, унăн медальсем те пур.

Çамрăклах, 40 çулта, мăшăрĕсĕр тăрса юлать. Пире, 5 ачине пăхса çитĕнтерме çăмăл пулман. Халĕ те пирĕн юратнă çыннăмăр ахаль лармасть. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк усрать. Ачисемпе мăнукĕсене яланах пулăшса тăрать. Ялта та анне хисеплĕ те сăваплă çын.

Хаклă çыннăмăра çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх та иксĕлми телей, тату пурнăç, вăй-хал сунатпăр. Çемье ăшшине тытса тăнăшăн, хуйхăра та, савăнăçра та пĕрле пулнăшăн тав тăватпăр. Эсĕ пирĕншĕн яланах юратнă та чи хаклă çын. Эпир санпа мăнаçланатпăр, мухтанатпăр.

**Салампа: 3 хĕрĕпе 2 ывăлĕ, 3 кĕрĕвĕ, 2 кинĕ, 12 мăнукĕ.**



Юратнă çыннăмăра – Калмăк ялĕнче пурăнакан **Валентина Федоровна ВОРОНИНĂНА** 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăй-хал сунатпăр. Пире пулăшса пынăшăн, пирĕнпе яланах ырă кăмăллă пулнăшăн тав тăватпăр. Татах нумай çул таса сывлăхпа пире савăнтарса пурăнма Турри пиллĕх патăр сана.

**Пысăк салампа: ывăлĕсем, кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Фермăри хĕл кунĕсем

# Тирпейлĕ сарайĕнче вăй хума кăмăллă

***Иртнĕ эрнере район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен черетлĕ пĕрлехи кунне ирттерчĕ. Район администрацийĕн граждански оборона тата чрезвычайлă сектор пуçлăхĕ Н. Милютин, районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцири ветлабораторий ертӳçи Л. Бояринова пĕр ушкăнпа çула тухрĕç. Вĕсем пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнче ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводра пулса курчĕç.***

– Выльăх-чĕрлĕх валли çăва тухиччен апат-çимĕç çителĕклĕ тесе шутлатпăр. Çавна кура производство та, сĕт сăвăмĕ кăна ĕне пуçне вăтамран 50-100 грамм сахалрах пулса пырать. Анчах ку та хальлĕхе кăна тесе шутлатпăр, мĕншĕн тесен тырă кӳрсе килессипе паянхи куна виçĕ килĕшӳ пур та ĕнтĕ. Апат пуррине кура выльăхсен кĕтĕвне те чакармастпăр. Ку вара патшалăх пулăшăвĕпе çителĕклĕ усă курма май парать, – терĕ пирĕн тĕллевсемпе паллашсан хуçалăх ертӳçи В. Ананьев.

Кашмашри сĕт фермине пĕтĕмĕшле пăхса илнĕ хыççăн Çатракассинчи сĕт фермине çитрĕмĕр. Ферма ертӳçи В. Григорьев пире кăмăллă кĕтсе илчĕ. «Çуркунне çывхарать. Çавна шута илсе сарайсен çивиттийĕсене хамăр вăйпа тата строительсен бригади пулăшнипе юртан тасатрăмăр. Хуçалăхри ырă йăлапа ферма çывăхне кĕркуннех çителĕклĕ утă-улăм турттарса хунă. Тислĕк вăхăтра тухса тăрать. Ĕçлеме кăмăл пысăк», – терĕ вăл пире хирĕç тухса.

Тынасен сарайне кĕтĕмĕр. Витере сывлăш уçă. Кунта анчах илсе кĕнĕ утă шăрши хуçаланать. 108 тынана тăтăшах – уйрăмах пĕчĕкреххисене – ыраш пĕçерсе параççĕ. Çамрăк выльăхсем умĕнче силос та çителĕклех. Кормушкăсенчи утă хуçалăхра апат тĕлĕшпе лару-тăру питех йывăр маррине систерет.

Ĕнесем тăракан сарайне куçрăмăр. Витесенче те, пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçмалли пӳлĕмсенче те иртнĕ кĕркунне ирттернĕ юсав ĕçĕсем палăраççĕ. Ĕне сăвакансем патне çитсен те калаçу тӳрех юсав ĕçĕсем çине куçрĕ:

– Хуçалăх председателĕ выльăх-чĕрлĕх отраслĕ çине тимлĕ пăхни пире те хамăр ĕçе ячĕшĕн тума чарать. Ĕç укçине вăхăтра илетпĕр. Кунпа пĕрлех ĕçлемелли çи-пуçпа тивĕçтересси те вăхăтлă пулса пырать. Хуçалăх ертӳçи, зооветспециалистсем ĕçлекенсемпе пĕр чĕлхе тупни кадрсен ыйтăвне те кун йĕркине кăлармасть. Ку вара ыранхи куна шанса вăй хумалли тĕкĕ, – терĕ ирхи сăвăм хыççăн ĕнесем патĕнче тирпейлекен Тамара Обжелянская доярка.

1977 çултанпа çак фермăра ветеринари фельдшерĕнче ĕçлекен Галина Алексеевна Григорьева ертсе пынипе тирпейлĕ сарайсемпе иртсе ĕне сăвакансем канакан пӳлĕме çитрĕмĕр. Кунта та кашни утăмрах тасалăх хуçаланать. Кану пӳлĕмĕнче телевизор ĕçлет. Ăшă, ĕç тумтирĕ улăштармалли шкафсемпе лармалли пукансем тата таса сĕтел кунта та тирпейлĕх малти вырăнти çинчен калаççĕ. Фельдшер пӳлĕмĕнче те иртнĕ çул тунă юсав ĕçĕсем хăт кĕртни яр уççăнах курăнать.

– Председатель пулăшать те пирĕн те ĕçлес кăмăл ӳсет. Владислав Кириллович хуçалăх тилхепине тытсан укçа çук, тумастпăр тесе паянхи ĕçе ырана хăварни пулмарĕ. Ертӳçĕ тимлесе тăрăшнă чух пирĕн алă усса ларас-и? – ыйтуллăн та кăмăллăн калаçать ветеринари фельдшерĕ Г. Григорьева.

Хуçалăхри выльăх витисем тăрăх ертсе çӳренĕ май кооператив-заводăн тĕп выльăх тухтăрĕ Э. Любимова производство калăпăшĕ пирки тата выльăх чирĕсенчен хӳтĕленессипе епле ĕçлени çинчен тĕплĕ каласа пачĕ.

Кăрлач–нарăс уйăхĕсенче «Свобода» хуçалăхра пĕтĕмпе 187829 кг сĕт сунă, сыснасене талăксерен 459 грамм, мăйракаллă шултра выльăхсене талăкра вăтамран 719 грамм ӳт хуштарнă, пĕтĕмпе 413 çура илнĕ.

Çав кунах кăнтăр иртсен район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ тата ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Калинин çирĕплетнĕ графикпа хуçалăхсенче пулса курнă ответлă специалистсемпе пĕтĕмлетӳ канашлăвĕ ирттерчĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарассипе ĕçсем паян Чкалов яч. хис., Суворов яч. хис., Ильич яч. хис., «Ударник», «Оринино» хуçалăхсемпе «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче ыттисенчен лайăхрах пыраççĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

Çур аки алăкран шаккать

# Юсавлă техника – тухăçлă ĕç никĕсĕ

**Çурхи уй-хир ĕçĕсен планне туллин те пахалăхлăн пурнăçлас тĕллевпе паян юсавра ларакан ял хуçалăх техникине ĕçе хатĕрлесе çитерессипе çителĕклĕ вăй хуратпăр-и-ха? Ыйтусем нумай. Çĕр ĕçĕн тĕп пайне паянхи хресчен техника пулăшăвĕпе пурнăçланăран ял хуçалăхĕн çак сферинче çурхи уй-хир ĕçĕсене хатĕрленесси епле пынипе интереслене патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕпе С. А. НИКОЛАЕВПА калаçу ирттертĕмĕр.**

**– Сергей Александрович, техникăна ĕçе хатĕрлесси пĕр кунхи ĕç мар. Хĕвел кунсерен çӳлтен çӳле хăпарнине пăхса-сăнаса хресчен хире тухиччен ĕçлемелли техникăн техосмотр тăрса ĕçе тухма ирĕк илмелле. Çапла мар-и?**

– Кунсем вăрăмланни çур аки çывхарнине систерет. Çавна май сирĕн ыйту нихăçанхинчен те ытларах кун йĕркине çывăх тăрать. Йăнăшни пирки кунта сăмах пулма та пултараймасть. Чăн çĕр ĕçченĕ паян эсир каланине хăйĕн кулленхи тĕллевĕ туса çур акине хатĕрленет: ĕç планĕ тăвать, вăрлăх янтăлать, минераллă удобрени тата сĕрмелли-çунтармалли материалсем туянать, хĕл каçнă техникăна юр айĕнчен кăларса юсама пуçлать, киввине çĕннипе ылмаштарать т. ыт. те. Пĕр сăмахпа каласан ларса канма та вăхăт çук унăн паян. Пирĕн службăн çак вăхăтри тивĕçĕ – хресчене çур аки ĕçĕсене юсавлă техникăпа тухма ирĕк парасси. Çакна валли РФ Правительствин 2002 çулхи 117-мĕш номерлĕ постановленийĕ те пур. Унта тракторсене, хăй тĕллĕн çӳрекен çулйĕр тата строительство техникине, вĕсен прицепĕсене патшалăх техника тĕрĕслевне тăратмалли йĕркене çирĕплетнĕ. Вăл паян пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçисемшĕн, инженерсемпе механизаторсемшĕн тĕп саккун пулса тăрать. Унпа килĕшӳллĕн кăçал тракторсемпе вĕсен прицепĕсене пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен, предприятисемпе организацисен тата хăйсен харпăрлăхĕнче трактор тытакан граждансен техника хатĕрĕсене техосмотра ака-çу уйăхĕсенче тăратмалла. Çакна валли Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти тĕрлĕ тĕслĕ машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. П. Димитриев иртнĕ кунсенче приказ кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн пирĕн районти хуçалăхсемпе предприятисем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техникăна тытакан уйрăм граждансем валли кăçалхи техосмотр графикне çирĕплетнĕ. Вăл ял тăрăхĕсенчи **(1-мĕш колонкăра)** пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрле çав территорисенчи уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчи ял хуçалăх техникишĕн те пĕр кунта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен машинăпа трактор паркĕсенче çак кунсенче **(2-мĕш колонкăра)** иртĕ **(3-мĕш колонкăра регистрациленĕ техника мĕн чуль пурри).**

Хуçалăхсен ертӳçисемпе инженерĕсем çур аки умĕн çак графика çирĕп пăхăнасса шанас килет. Техникăна ĕçе юрăхлă хатĕрлени – çур акири ăнăçăвăн пĕрремĕш утăмĕ.

**– Сергей Александрович, техосмотра хатĕрленнĕ чух мĕн çине ытларах тимлĕх уйăрмалла?**

– Техосмотра хатĕрленĕ техника çинче пур механизмсемпе агрегатсен те ĕçлемелле, вĕсен таса, тормоз системипе руль управленийĕн т. ыт. те юсавлă пулмалла, тракторсемпе ытти хăй тĕллĕн çӳрекен техника çинче пушартан сыхланма огнетушитель, ĕçлекенсене вăхăтра медицина пулăшăвĕ пама медицина аптечки, авари чарăнăвĕн паллисем пулмалла. Техника тĕрĕслевне хатĕрленнĕ чух инженерсемпе механизаторсен хăй тĕллĕн çӳрекен техникăн паспорчĕ, регистраци свидетельстви тата кашни механизаторăн медицина справки çинчен асрах тытмалла. Кунпа пĕрлех тракторист çумĕнче ирĕк паракан категориллĕ удостоверени – чи кирли. Техосмотра хатĕрленнĕ май тракторсемпе прицепсене çуса тасатмалла, сăрламалла, çумра страховани полисĕ пулмалла.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

## Техосмотр ирттермелли график

| | | |
|---|---|---|
| **Уйкас Янасал ял тăрăхĕ** | | |
| Ильич яч. хис. | 30.03 | 23 |
| Уйрăм граждансем | 30.03 | 10 |
| **Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ** | | |
| ИП Пихтеров А. Н. | 07.04. | 8 |
| КФХ Бархаткин В. В. | 07.04 | 6 |
| КФХ Толстов А. И. | 07.04 | 7 |
| Ытти КФХсем | 07.04 | 5 |
| Уйрăм граждансем | 07.04 | 64 |
| **Ильинка ял тăрăхĕ** | | |
| «Волга» | 13.04 | 3 |
| «Хлебороб» | 13.04 | 11 |
| Уйрăм граждансем | 13.04 | 35 |
| **Катькас ял тăрăхĕ** | | |
| «ВТМ» | 14.04 | 1 |
| «Моргаушская» | 14.04 | 11 |
| Уйрăм граждансем | 14.04 | 64 |
| **Муркаш ял тăрăхĕ** | | |
| Е. Андреев яч. хис. | 06.04 | 17 |
| Уйрăм граждансем | 06.04 | 13 |
| **Москакасси ял тăрăхĕ** | | |
| «Передовик» | 08.04 | 18 |
| Уйрăм граждансем | 08.04 | 53 |
| **Оринин ял тăрăхĕ** | | |
| «Восток» | 28.03 | 12 |
| «Оринино» | 28.03 | 26 |
| Уйрăм граждансем | 28.03 | 16 |
| **Çатракасси ял тăрăхĕ** | | |
| «Свобода» | 04.04 | 40 |
| Уйрăм граждансем | 04.04 | 35 |
| **Турай ял тăрăхĕ** | | |
| Суворов яч. хис. | 01.04 | 23 |
| Уйрăм граждансем | 01.04 | 24 |
| **Хорнуй ял тăрăхĕ** | | |
| Уйрăм граждансем | 18.04 | 23 |
| **Чуманкасси ял тăрăхĕ** | | |
| Чапаев яч. хис. | 31.03 | 23 |
| Чкалов яч. хис. | 31.03 | 13 |
| Уйрăм граждансем | 01.03 | 40 |
| **Шетмĕпуç ял тăрăхĕ** | | |
| «АПФ «Колос» | 15.04 | 4 |
| КФХ Михайлов А. Н. | 15.04 | 4 |
| КФХ Горбунов В. В. | 15.04 | 4 |
| КФХ Петров А. А. | 15.04 | 5 |
| Уйрăм граждансем | 15.04 | 30 |
| **Юнкă ял тăрăхĕ** | | |
| Уйрăм граждансем | 12.04 | 32 |
| **Йӳçкасси ял тăрăхĕ** | | |
| «Ударник» | 05.04 | 71 |
| Уйрăм граждансем | 05.04 | 35 |
| **Ярапайкасси ял тăрăхĕ** | | |
| «Герой» | 29.03 | 20 |
| Уйрăм граждансем | 29.03 | 46 |
| **Ярославка ял тăрăхĕ** | | |
| «ВаСем» ООО | 11.04 | 3 |
| Уйрăм граждансем | 11.04 | 30 |

**СПИСОК**
**собственников невостребованных земельных долей**
**СХПК «Герой»**

**Окончание списка.**

| | |
|---|---|
| Васильева Елена Федоровна | ЧР -21-17-00499 |
| Леонтьева Анфиса Ивановна | ЧР -21-17-00502 |
| Леонтьев Андрей Александрович | ЧР -21-17-00503 |
| Ермолаев Валериан Алексеевич | ЧР -21-17-00504 |
| Ермолаева Римма Ивановна | ЧР -21-17-00505 |
| Корнеева Нина Николаевна | ЧР -21-17-00506 |
| Борисова Ольга Павловна | ЧР -21-17-00511 |
| Борисов Николай Петрович | ЧР -21-17-00512 |
| Ильина София Ильинична | ЧР -21-17-00515 |
| Малеев Владимир Тимофеевич | ЧР -21-17-00516 |
| Степанов Михаил Николаевич | ЧР -21-17-00518 |
| Пидимирова Римма Сергеевна | ЧР -21-17-00519 |
| Андреева Екатерина Григорьевна | ЧР -21-17-00520 |
| Григорьева Матрена Ивановна | ЧР -21-17-00530 |
| Романов Аркадий Николаевич | ЧР -21-17-00540 |
| Романова Римма Димитриевна | ЧР -21-17-00541 |
| Белов Анатолий Иванович | ЧР -21-17-00544 |
| Гаврилов Леонид Михайлович | ЧР -21-17-00546 |

**Лица, считающие, что они или принадлежащие им земельные доли необоснованно включены в список невостребованных долей, вправе предоставить в письменной форме возражения в органы местного самоуправления поселения и заявить об этом на общем собрании участников долевой собственности.**

**Глава администрации Ярабайкасинского сельского поселения В.В. ГОЛУБЕВ.**

Хуçалăхсенче

# Кун йĕркинче – вăрлăх хатĕрлесси

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çуртри вăрлăхĕн пахалăхĕ мĕнле пулнине кăтартни (пуш уйăхĕн 21-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Вăрлăх илсе пынă. 2. Тĕрĕсленĕ (центнерпа). 3. Кондициллĕ вăрлăх (процентпа). 4. Кондицие лартман вăрлăх пĕтĕмпе (центнерпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 1460 | 1460 | 74 | 380 |
| «Волга» | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Восток» | 1050 | 1050 | 87 | 135 |
| «Герой» | 2555 | 2555 | 71 | 730 |
| Ильич яч. хис. | 2160 | 2160 | 48 | 1130 |
| ВТМ | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Моргаушская» | 650 | 650 | 100 | 0 |
| «Оринино» | 1149 | 1149 | 100 | 0 |
| «Передовик» | 1380 | 1380 | 65 | 489 |
| «Свобода» | 2920 | 2920 | 82 | 518 |
| Суворов яч. хис. | 2465 | 2465 | 92 | 199 |
| «Ударник» | 3442 | 3442 | 86 | 495 |
| Чапаев яч. хич. | 1695 | 1695 | 100 | 0 |
| Чкалов яч. хис. | 1095 | 1095 | 74 | 785 |
| Мичурин яч. хис. | 600 | 600 | 100 | 0 |
| КФХ Толстов А. И. | 300 | 300 | 0 | 300 |
| КФХ Бархаткин В. В. | 600 | 600 | 100 | 0 |
| ООО «Гея» | 400 | 400 | 100 | 0 |
| ООО «ВаСем» | 600 | 600 | 33 | 400 |
| КФХ Трепнев А. А. | 300 | 300 | 100 | 0 |
| КФХ Каргин Р. Л. | 134 | 134 | 29 | 95 |
| КФХ Горбунов | 745 | 745 | 91 | 70 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **25700** | **25700** | **78** | **5726** |

Кĕçех çур аки ума тухĕ. Çак ответлă тапхăра вăрлăх янтăлассипе хуçалăхсем паян епле хатĕрленеççĕ-ха? Хуравĕ çӳлерех илсе кăтартнă таблицăран аван курăнать. Вăрлăхăн пысăк пайĕ тасалăхпа ака кондицине ларманни хуçалăхсем гербицидсемпе япăх ĕçленине тата вырма вăхăтĕнче йĕтемсем çинчи ĕçе япăх йĕркеленине кăтартать. Паян вара хывса хăварнă вăрлăх çĕр ĕçченĕн чунне тивĕçтереймест. Çав вăхăтрах паян хуçалăхсем вăрлăх улăштарассипе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Ку ĕçе те кая хăварас марччĕ.

Кондициллĕ вăрлăх 78 процента çитрĕ. Çав вăхăтрах «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикипе «Оринино», Чапаев яч. хис., Мичурин яч.хис., В. Бархаткинпа А. Трепнев ертсе пыракан хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче тата «Гея» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра янтăланă вăрлăх пĕтĕмпех ака кондицине тивĕçтерет. Çур еннелле сулăнтăмăр, çанталăк уяр та хитре, ăшă тăрать. Ку вăхăт вăрлăх аласа ăна кондицие лартма питех те меллĕ.

Çур акичченхи вăхăтпа хуçалăхсем туллин усă курса юласса, тивĕçлĕ йышăнусем тăвасса шанас килет.

**В. МОРОЗОВ, «Россельхозцентр» филиалăн районти пайĕн пуçлăхĕ.**

Ыйтăр – хуравлатпăр

# Штамп – Интернет урлă

***Пурнăç калама çук хăвăрт улшăнса пырать. Иртнĕ кунсенче эпĕ паспортри штампа та Интернетпа усă курса килтен тухмасăрах лартма май пуррине илтрĕм. Тĕрĕс-и çакă?***

**Е. МАСТЕРОВА.**

**Вулакан ыйтăвĕпе эпир федераллă миграци службин районти территори пункчĕн пуçлăхне Зоя Михайловна СОРОКИНĂНА паллаштартăмăр. Унăн хуравĕ ансат пулчĕ:**

– Çĕнĕлĕхсем вăй илсе пыни паспортпа виза службине те вырăнта лартмасть. Паян регистраци тĕлĕшпе паспорт çине штамп лартассине чăнах та Интернет урлă та пурнăçлама пулать. Анчах та пурăнмалли пӳлĕм уйрăм çын харпăрлăхĕнче пулсан федераллă миграци службин районти территори пунктне кил хуçин ирĕкĕ кирлĕ. Енчен те эсир çĕнĕ çурт е хваттер туянтăр çеç пулсан сире пропискăна тăратмалли ирĕк куçман пурлăхăн патшалăх регистраци свидетельстви шутланать.

«Шурă ромашка» акци

# Туберкулезпа чирлессинчен сыхланăр

Туберкулез социаллă чир шутланать. Вăл пирĕн пурнăç условийĕсемпе тачă çыхăннăран ĕнтĕ пирĕнтен пĕр утăм та кая юласшăн мар. Ытларах эрех-сăра ĕçекенсем, ĕçсĕррисем, пенсионерсем, арçынсем чирлеççĕ туберкулезпа. Паллă ĕнтĕ, кирлĕ пек апатланманни, пирус туртни те чирлессин сăлтавĕсен шутне кĕреççĕ.

Мускава тата ытти тĕрлĕ вырăнсене укçа ĕçлесе илме çÿрекенсем çак чире çăмăллăнах «çаклатса» килеççĕ. Е тата тĕрмесенчен таврăнакансем те…

Çавăнпа та çакăн пек çынсемпе юнашар пурăнакансен флюорографи тĕрĕслевĕсене вăхăтра тумалла. Унсăрăн туберкулезпа чирленине вăхăтра тупса палăртассинчен юлма пулать. Чире вăхăтра тупса палăртни вăхăтра сиплеме пуçланине нимĕн те çитмест. Уйăхсемпе ÿт-пÿ температури пĕр пек 37,5 градус тăрать, çын икĕ эрне ытла ÿслĕкпе аптăрать тата пĕрмаях ывăнать пулсан унăн пĕр тăхтамасăрах участок врачĕпе канашламалла. Хыççăн вара флюорографи тăмалла, çăра сурчăка кунне виçĕ хут илсе тĕрĕслеттермелле.

2010 çул вĕçленнĕ тĕле туберкулезпа чирлекенсем пирĕн районта малтанхи çулхинчен 10 çын ытларах пулни палăрчĕ. Пĕтĕмĕшле чире пула вилекенсем сахалланни кăшт лăплантарать çеç. Пĕлтĕр тата аслă ÿсĕмрисем те малтанхи çулхинчен ытларахăшĕ флюорографи тĕрĕслевне тухни, апла хамăрăн сывлăх çине тимлĕрех пăхма пуçлани те кăмăлла хăпартать.

Ку чир – ерекенскер, çавăнпах тен тупса палăртманнисем те пулĕ-ха.

Ачасемпе çамрăксем хушшинче туберкулезпа чирленĕ тĕслĕхсем районта çук. Вĕсене тĕрĕслесси Манту реакцийĕ тата флюорографи (15 çултан иртнисене) урлă пулса пырать.

2011 çул пуçланнăранпа вăхăт ытла нумай иртмерĕ пулин те туберкулезпа чирлекен 6 çынна тупса палăртрăмăр. Çак чире пула кăçал пĕр çын çĕре кĕчĕ. Çавăнпа та чир хăрушлăхне кашни çыннăн ăнланмалла.

**Мартăн 20-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 20-мĕшĕччен пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ «Шурă ромашка» акци иртет. Çак акци – туберкулез чирне хирĕç кĕрешес меслетсенчен пĕри. Çавăнпа та палăртнă тапхăрта пурне те Муркашри тĕп больницăра, Мăн Сĕнтĕрти больницăра флюорографи кабинечĕсенче тÿлевсĕр йышăнаççĕ. Шăмат кунсенче больницăсем ĕçлеççĕ. Асра тытăр: флюорографи тĕрĕслевĕ туберкулеза тата ытти чирсене аталанма пуçласанах тупма пулăшать.**

**О. МИХАЙЛОВА,**
**Муркашри тĕп больницăри фтизиатр врач.**

Пултарулăх

# Ял шăпи хумхантарнăран

«Çамрăксене шанмалла», – çирĕппĕнех калать пирĕн президент М.В. Игнатьев. Вĕсенче пирĕн пуласлăх та, шанчăк та. Анчах та тĕрлĕ сăлтавсене пула хальхи çамрăксем яла юласшăн тăрăшмаççĕ. Ялти вăйлăхран хăраççĕ е тата хăйсем вĕреннĕ профессипе ĕçлемеççĕ. Хулана кайсан яла таврăнасшăн мар.

Çак кунсенче пирĕн Вăрманкассинчи социаллă культура центрĕнче Константин Федорович Ярухин йĕркеленĕ «Сипет» пултарулăх ушкăнĕ «Туй икерчи» спектаклĕпе пулчĕ. Спектакльти ĕç-пуç çамрăксем тавра пырать, вĕсен çивĕч ыйтăвĕсене ума кăларать. Комедире çамрăк ветеринара Селифона тăван яла тавăрма май тупаççĕ.

Ял халăхне спектакль питĕ килĕшрĕ. Артистсене тăвăллăн алă çупса тав турăмăр. Ял проблеми хытă хумхантарни палăрчĕ: спектакль хыççăн та çынсем пĕр-пĕринпе тĕрлĕ шухăшсене сÿтсе яврĕç.

**В. АФАНАСЬЕВА,**
**библиотека ертÿçи.**

# Ăмăртусем хастар иртрĕç

Мартăн 18-мĕшĕнче Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çуртĕнче пурăнакансем республикăри социаллă пулăшу паракан патшалăх учрежденийĕсем хушшинчи ăмăртусене хутшăнчĕç. Ăмăртусем йĕлтĕрпе чупассипе, мечĕк перессипе, городки енĕпе тата волейболла выляссипе пулчĕç, çулланнă çынсемпе инвалидсен «Вега» социаллă сиплевĕн республикăри патшалăх учрежденийĕнче иртрĕç.

Ăмăртусене республикăри патшалăх учрежденийĕсен 12 команди хутшăнчĕ. Йĕлтĕрпе чупассипе арçынсем 1300, хĕрарăмсем 1000 километрлă дистанцисенче вăй виçрĕç. Ку ăмăртусенче Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çуртĕнче пурăнакансен команди пĕтĕмĕшле 2-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ, Хисеп грамотине тивĕçрĕ. Кунсăр пуçне уйрăм ěнсемпе те призлă вырăнсем пулчĕç.

**В. КРЮЧКОВА,**
**Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çурчĕн социаллă ĕçсен специалисчĕ.**

Редакци почтинчен

# Ача-пăча çыравçине халалласа

Паллă поэтесса Агния Барто çуралнăранпа 105 çул çитнине халалласа Аталай шкулĕнче сăвăсен конкурсĕ иртрĕ. Пуçламăш классенче вĕренекенсем унăн сăввисене вуларĕç. Никита Орлов «Йытăпа крокодил», Вероника Музыкова «Урокри тĕлĕнтермĕш», Таня Сурикова «Ÿнерçĕ», Костя Петров «Анне», Настя Атласкина «Йăнăш турăм» ятлă сăвăсене вулани куракансене уйрăмах килĕшрĕ.

Конкурс вăхăтĕнче вара эпир поэтесса пирки интереслине нумай пĕлтĕмĕр. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче вăл тăрăшнипе «Çынна тупасчĕ» радиопередача йĕркеленĕ пулнă. Çак передача урлă вара вăрçă вăхăтĕнче пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă çынсем тĕл пулма пултарнă. Конкурса хатĕрлесе йĕркелекенĕсем пирĕн учительсем пулчĕç: С.Г. Вязовăпа Е.Н. Музыкова. Вĕренекенсем сăвăсене ăнланса та илемлĕ вуласа пани лайăх шайрине палăртрĕç вĕсем.

**Клава МАКСИМОВА,**
**5 класра вĕренекен.**

Профилактика операцийĕ

# Инкексем, сурансем ан пулччăр

Пĕтĕм тĕнчери сывлăха сыхлакан организаци палăртнă тăрăх çулсерен çулсем çинчи инкек-синкексене пула 1 миллион та 200 пин çынна яхăн вилет. Аварисенчен пĕрре виççĕмĕш пайĕ вара талăкăн тĕттĕм вăхăтĕнче пулса иртет. Ку вăхăтра çулсем çинче транспорт сахалрах çÿрет пулин те аварисенчи сурансем кăнтăр çутинче пулнинчен йывăртарах пулаççĕ.

Транспортăн çутă приборĕсем талăкăн тĕттĕм вăхăтĕнче водителе пăтăрмах кăларса тăратмалла мар. Водителĕн умри çула пăхса пыма çутă çителĕклĕ пулмалла, çав вăхăтрах хирĕç килекен транспорт водителĕн куçне те йăмăхтармалла мар. Çутă приборĕсен талăкăн тĕттĕм вăхăтĕнче транспортăн йĕркине таврашне те палăртмалла. Каçхи тата çĕрлехи вăхăтра пулса иртекен аварисен сăлтавĕсенчен пĕри – водительсем транспортăн çутă приборĕсене юсавлă тытманни.

Çулталăк пуçланнăранпа, мартăн 16-мĕшĕччен, пирĕн район территорийĕнчи çулсем çинче 10 аварипулса иртрĕ. Вĕсенче 2 çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ, 22 çын суранланчĕ. Пĕлтĕрхи çулăн çак тапхăрĕпе танлаштарсан çулсем çинчи инкексен хисепĕ 66,6 процент ÿсрĕ.

Çул-йĕр çинчи лару-тăрăва стабилизацилес, транспорт водителĕсен дисциплинине çирĕплетес тĕллевпе мартăн 21–30-мĕшĕсенче Патшалăх çулйĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пуçарăвĕпе Чăваш Республикинче, апла пулсан пирĕн районта та, «Ксенон» профилактика операцийĕ иртет.

Операци вăхăтĕнче çул-йĕр çинчи тĕрĕслевсем тата транспорт техосмотрĕсем вăхăтĕнче çутă приборĕсене çирĕп тĕрĕслеççĕ. Кунпа пĕрлех хăрушсăрлăх пиçиххийĕсем, хушма ларкăчсем туса лартни те тимлĕхсĕр юлмĕ. Транспортăн кантăкĕсен çутă çителĕклĕ кĕртнипе кĕртменнине, транспорт конструкцийĕпе пăхса хуман çутă приборĕсем вырнаçтарнине те сотрудниксем куçран вĕçертмĕç.

**С. ИВАНОВ,**
**ГИБДД инспекторĕ.**

# «Юратсан юрлас килет» спектакль – Муркашра

–Тахçантанпах театрта пулман, – тенине час-часах илтме пулать юлашки вăхăтра. **Мартăн 30-мĕшĕнче** вара эсир Муркашрах çав ĕмĕте пурнăçа кĕртме пултаратăр. Çак кун Пĕтĕм тĕнчери театр кунне (мартăн 27-мĕшĕнче паллă тăватпăр ăна) халалласа **Муркашри районти Культура çуртĕнче В.Лекановăн «Юратсан юрлас килет» икĕ пайлă камитне кăтартаççĕ.** К.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артисчĕсем лартакан çак спектакле 2006 çултанпах халăх юратса йышăнать, аншлаг картлашкинчен анмасть вăл. Артистсем çак спектакльпе пĕрре мар хамăр республикăри тĕрлĕ районсенче, республика тулашĕнче пулнă. Муркаша вара артистсем ку камитпе пĕрремĕш хут килеççĕ. **Унта юрлакан юрăсене пĕтĕмпех пирĕн ентеш Юрий Жуков композитор кĕвĕленĕ.**

– Юррисем çав тери чуна хускатаççĕ, асра юлаççĕ, халăха çывăх вĕсем, – теççĕ куракансем.

Спектакль хыççăн çак юрăсен сăмахĕсене ыйтаççĕ.

Спектакльти сăнарсене вара эпир пурте пĕлекен Надежда Зубкова, Валерий Карпов, Алексей Степанов, Любовь Федорова, Владимир Семенов тата ытти ăста артистсем выляççĕ.

**Спектакль 18 сехет те 30 минутра пуçланать. Билет хакĕ – 100 тенкĕ. Килсе курăр!**

## Концерта чĕнеççĕ

***Çамрăк чăваш эстрада юрăçисен республикăри 2-мĕш «Çĕнĕ ятсем» конкурсĕ мартăн 25-мĕшĕнче Муркашри Культура çуртĕнче 18 сех. 30 мин. концерта чĕнет. Çамрăк юрăçсем хушшинче пирĕн ентешсем: Шетмĕпуçĕнчи Николай Кличников, Юнкăри Людмила Кудряшова. Билет хакĕ – 100 тенкĕ.***




Администрация Моргаушского сельского поселения сообщает о проведении публичных слушаний по проекту решения Собрания депутатов Моргаушского сельского поселения «О внесении изменений в генеральный план Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики» в связи с планируемым размещением объекта «Бизнес-центр» по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, 30 марта 2011 года в 15 часов 00 мин. в здании Моргаушского ДК: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Красная площадь, д. 5.

Спорт

# Волейболра – арçынсем

Мартăн 26-мĕшĕнче ĕç коллективĕсен спартакиадипе палăртнă черетлĕ ăмăрту иртет. «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче районти предприятисенчи, организацисемпе учрежденисенчи арçынсен командисем волейболла выляççĕ. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать. 9 сехет çурăра шăпа яраççĕ. Çĕнтерÿçĕсене, вăйăра палăрнă уйрăм вылякансене дипломсемпе тата парнесемпе чыслаççĕ.

**Постановление главы администрации**
**Кадикасинского сельского поселения**
**№ 29 от 23 марта 2011 года**

**О проведении публичных слушаний по проекту решения по проекту муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района ЧР **ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 12 апреля 2011 года в 10 часов 00 минут в здании администрации Кадикасинского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Кораккасы, ул. Новая, дом 1.

2. Настоящее постановление подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Глава администрации Кадикасинского сельского поселения**
**Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**

**Проект муниципального правового акта**
**Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:300101:152, из категории «земли сельскохозяйственного назначения», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:300101разрешенное использование для «стоительства магазина» площадью 619 кв. м. на «для ведения личного подсобного хозяйства».

С предложениями по проекту муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 12.04.2011 года до 9-00 часов.

Пĕлтерÿсем. Объявления

**Куплю старый дом до 70 тыс. руб. Тел.: 8-987-577-66-41. 1-2.**

* * *

**Продается комната, в идеальном состоянии в г. Чебоксары. Остановка «Ромашка». Тел.: 8-927-850-94-46.**

* * *

**Дорого покупаю металлолом. Тел.: 89053415311.**

* * *

**ЗАО «МСО «Моргаушская» уведомляет о повышении стоимости кв. м. жилья с 30 марта 2011 года. Тел.: 69-7-23; 63-1-19.**

* * *

**Продаем картофель: продовольственный и семенной. Цена договорная. Тел.: 89520279445.**

* * *

**Срочно куплю новую деревянную кровать, комод. Тел.: 89613455261.**

* * *

**Продается зерно (пшеница, ячмень). Звонить по тел.: 89278433615.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

* * *

**Требуется тракторист-машинист на МТЗ с опытом работы, без вредных привычек на сезонные полевые работы. Тел.: 89603131548.**

* * *

**23-27 кг таякан, 250 тенкĕ тăракан тюкланă утă сутатăп. Тел.: 89603138668.**

* * *

**Куплю дом под снос с земельным участком в с. Моргауши. Тел.: 89373877087.**

* * *

**Продается трактор МТЗ-80 в хорошем рабочем состоянии, ЮМЗ-6 в рабочем состоянии. Цена договорная, торг. Тел.: 89063847942, 89603070920.**

**25 марта с 8-00 до 16-00 часов Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Белорусской фабрик и других российских производителей. 4-6.**

**Продается сено в тюках, в неограниченном количестве, с доставкой. Сено местное, неприводное, высокого качества. Тел.: 8-906-384-48-30. Сергей. Тел.: 8-927-990-39-08. Вася. 4-5.**

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». Установка, гарантия. 6800 руб. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-7.**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060801:175, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Большие Татаркасы, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2293 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней.

Телефон для справок: 62-2-66.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**

**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Пăрлĕхри – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.**

**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**

**Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.**
**Пичете панă 22.03.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4329.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.